# Патша хӗрне ҫӑлни

*(ТРИЗ технологийепе уса курса вӑтам ушкӑнраирттермелли вӑйӑ)*

***М.Н. ЛЕОНТЬЕВА**, Элӗкри иккӗмӗш «Хӗвел» ача сачӗн воспитателӗ*

**Вӗренӳ задачисем:** ачасен тавракурӑмне, шухӑш-кӑмӑлне аталантарасси; хӑйсене тупмалли юмахсем шухӑшласа кӑларма, пӗр-пӗр япалан хирӗҫле пӗлтерӗшне тупма верентесси; йывӑр лару-тӑруран тухма хӑнӑхтарасси; творчествӑллӑ шухӑшлава аталантарасси; геометри фигурисене ас туса юлма хавхалантарасси; ачан шухӑшлав логикине, ҫаврӑнӑҫулӑхне аталантарасси; йывӑр ыйтӑва пӗрле сӳтсе явса пӗр шухӑш патне тухасси; мӗн пӑшӑрхантарнине тупса палӑртасси.

**Воспитани тӗллевӗсем:** пӗр-пӗрне хисеплеме, итлеме вӗрентесси, йывӑр вӑхӑтра пулӑшма хӑнӑхтарасси.

**Кирлӗ ӗҫ хатӗрӗсем:** пысӑк пӳрт, пукане,

## В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Пысӑк пӳлӗмре воспитательпе ачасем урай варринче тӑраҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпӗ сире пӗр-пӗр япала ятне калатӑп, сирӗн вӑл мӗнле пайсенчен тӑнине каламалла. Кам тӗрӗс хуравлать – пукан ҫине ларать.

Воспитатель япала ячӗсем калать. Тӗслӗхрен: машина. Ачасем ун пайӗсене калаҫҫӗ: руль, урапа т.ыт.те.

– Маттур, ачасем, пурте вырнаҫса пӗтертӗмӗр. Халӗ «Аха е ҫук» вӑййа вылятпӑр.

Сӗтел ҫинче япаласем ӳкернӗ ӳкерчӗксем выртаҫҫӗ. Воспитатель вӗсенчен пӗрне илет. Ачасем тӗрлӗ ыйтусем парса вӑл мӗн шутласа хунине пӗлеҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! Халӗ арчана уҫса пӑхар-ха. Кунта ҫыру пур иккен. Атьӑр-ха ӑна вулар: «Пӗр патшалӑхра патша пурӑннӑ, унӑн питӗ хитре хӗр пулнӑ, Усал асамҫӑ унӑн илемлӗхне ӑмсаннӑ та патша хӗрне ҫывӑратса янӑ. Никам та ӑна вӑратаймасть. Пулӑшӑр-ха, ачасем, патша хӗрне ыйхӑран вӑратма!». Ачасем, инкеке лекнӗ патша хӗрне пулӑшатпӑр-и?

А ч а с е м. Пулӑшатпӑр!

В о с п и т а т е л ь. Усал асамҫă патша хĕрне хăтаракансем валли йывăрлăхсем хатĕрленĕ, пирĕн вĕсене ҫĕнтермелле, ҫавăн чухне ҫеҫ патша хĕрне ыйхăран вăратма пултаратпăр. Пурнăҫламалли ĕҫсем ҫак арчара. Мĕн тумаллине пĕлме карточка ҫинчи япаласене шутласа тивĕҫлĕ цифра шыраса тупмалла.

Ачасем карточка ҫинчи япаласене шутлаççĕ, «1» цифрăна тупаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, халĕ сирĕн тупмалли юмах тупсăмне пĕлмелле. Тимлĕ итлĕр!

Сăрăскер, пĕчĕкскер,

Пит вăрăм хăлхаллăскер,

Тути катăк, ҫăмлăскер,

Купăста юратаканскер.

А ч а с е м. Мулкач!

В о с п и т а т е л ь. Тĕп-тĕрĕс! Халĕ, ачасем, «Мĕн лайăх – мĕн япăх» вăййа выльăпăр. Акă пирĕн умра мулкач, мĕн калама пултаратăр эсир ун ҫинчен?

А ч а с е м. Вăл йĕпе.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн пулнă-ши ăна? Эсир мĕнле шутлатăр?

А ч а с е м. Вăл ҫумăр айне лекнĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, калăр-ха, ҫумăр ҫуни лайăх-и е япăх-и? Мĕн лайăххи ҫумăр ҫунинче?

А ч а с е м. Вăл пахча ҫимĕҫе шăварать. Ҫумăр хыççăн сывлăш уҫă.

В о с п и т а т е л ь. Мĕншĕн вăл япăх?

А ч а с е м. Ҫумăр ҫунă чух урамра выляймастăн, йĕпенсен чирлеме пултаратăн.

В о с п и т а т е л ь. Эпир мулкача мĕнле пулăшма пултаратпăр-ши?

А ч а с е м. Ăна типĕтмелле.

В о с п и т а т е л ь. Мĕнле майпа?

А ч а с е м. Хĕвел пулăшнипе.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр-ха ăна ӳкеретпĕр. (*Ачасем хĕвел ӳкереççĕ.*) Хĕвелĕн лайăх енĕсене калăр-ха. (*Ачасен хуравĕсем.*) Мĕнле шутлатăр, хĕвелĕн япăх енĕсем пур-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Апла пулсан хĕвелĕн те лайăх енĕсем тата япăх енĕсем пур. Эпир мулача ăшăнма тата типшĕнме пулăшрăмăр. Халĕ пирĕн малалла каймалла. Пăхар-ха арчана, карточка çине икĕ япала ӳкернĕ. (*Ачасем «2» цифра çырнă задание илеççĕ.*) Пирĕн халь пахча çимĕç пуçтармалла. Ӳкерчĕке тимлĕрех сăнăр-ха. Çӳлти сулахай кĕтесре мĕн ӳсет? (*Кишĕр.*) Мĕнле геометри фигурине аса илтерет вăл?

А ч а с е м. Виçкĕтеслĕхе.

Ачасем виçкĕтеслĕхе тупса кишĕр çумне çыпăçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Çапла, кишĕр виçкĕтеслĕхе аса илтерет. Аялти сулахай кĕтесре ӳсекенни мĕн-ши? (*Кавăн.*) Тĕрĕс, ачасем, пирĕн патра ăна мăн хăяр та теççĕ. Мĕнле фигурăна аса илтерет вăл? (*Овал.*) Тĕрĕс, ачасем, кавăн тăрăхла çавракана, овала, аса илтерет.

Ачасем кавăн патне тивĕçлĕ фигура тупса çыпăçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Сылтăм кĕтесре çӳлте мĕн ӳсет? (*Çарăк.*) Вăл мĕнле фигура пек? (*Çаврашка.*)

Ачасем çарăк çумне çаврашка çыпăçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ӳкерчĕк варринче пахча çимĕç хумалли ешчĕк. Вăл мĕнле фигурăна аса илтерет? (*Тăваткал.*) Маттур, ачасем! Унта хамăрăн пахча çимĕçе пуçтарар. Халĕ виççĕмĕш ĕçе пурнăçлама вăхăт çитрĕ.

Ачасен умĕнче тем тĕрлĕ теттесем выртаççĕ. Кашни ача хăйне килĕшекеннине суйласа илет. Ачасем алăри теттине воспитатель теттипе танлаштараççĕ, пĕрпеклĕх шыраççĕ.

Тĕслĕхсем: кушакăн 4 ура, тилĕн те; мечĕк те, пан улми те – çаврака.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! Пирĕн малалла каймалла, тепĕр интереслĕ ĕç пурнăçламалла. Пурте пĕлекен юмахри сăнарсене пăтраштарса янă, сирĕн унти йăнăшсене тӳрлетмелле. Тимлĕ итлĕр. «Пурăннă тет пĕр хĕр ача, ăна Сарă Калпак (*Хĕрлĕ Калпак*) тесе чĕннĕ. Ашшĕ (*амăшĕ*) ăна чĕнсе илнĕ те Анюк аппăшĕ (*кукамăшĕ*) патне янă. Çул çинче вăл упана (*кашкăра*) курнă. Кашкăр кукăльсене çисе янă та хĕр ачан кукамăшĕ патне чупнă».

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха Хĕрлĕ Калпакăн кукамăшне çăлатпăр. Ăна кашкăр çисе ан ятăр тесен пирĕн çак чĕр чун çинчен тупмалли юмах шутласа тупмалла. Кашкăр мĕнле-ха вăл? (*Ачасен хуравĕсем.*) Ачасем, эсир питĕ маттур! Пĕрле ак тупмалли юмах та шухăшласа тупрăмăр.

Тискер чĕр чун – упа мар,

Сăрă тĕслĕ – мулкач мар,

Шăлĕсем çивĕч – акула мар.

(*Кашкăр.*)

Маттур ачасем, эпир пур ĕçе те тивĕçлĕ пурнăçларăмăр. Пăхăр-ха, патша хĕрĕ пире хирĕç тухать. Мĕн тери хитре вăл! Ачасем, сире патша хĕрне çăлма килĕшрĕ-и? Хăш ĕçĕ йывăртарах пулчĕ? Патша сире хĕрне çăлнăшăн çакăн пек «ылтăн укçасем» панелет.

Воспитатель ачасене хитре хутсенчен касса тунă «укçасем» парнелет.